27-мĕш ҫул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
МАЙ
30
ЫТЛАРИКУН
106(6601) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ

Чăваш АССР Наркомземĕпе ВКП(б) Обкомĕн ялхуҫалăх отделĕ тăратнă тăрăх, тракторпа ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне срокчен пурнăҫланăшăн ялхуҫалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп Хăми ҫине ҫаксене кĕртнĕ:

33. **Елчĕк МТС-ĕ** (директорĕ **П. А. Яшин** юлташ, старши механикĕ **В. В. Указов** юлташ). МТС тракторпа ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне 1944 ҫулхи майăн 24-мĕшĕ тĕлне 100,3 процент тултарнă. План тăрăх 5986 гектар сухаламалла, 6020 гектар сухаланă, 1500 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Чи лайăх бригадирсем: **Г. И. Струнков** юлташ, унăн бригади ҫуркуннехи ĕҫсен планне 158,5 процент тултарнă, 276 килограмм горючи перекетленĕ; **П. Н. Марков** юлташ, унăн бригади плана 155 процент тултарнă, 300 килограмм горючи перекетленĕ; **В. А. Охотин** юлташ, унăн бригади плана 130 процент тултарнă; **Спиридонов** юлташ, унăн бригади плана 125 процент тултарнă, 136 килограмм горючи перекетленĕ; **Павлов** юлташ, унăн бригади плана 120 процент, **Арбузов** юлташăн бригади 117 процент, **Долгов** юлташăн бригади 116 процент, **Е. А. Мясников** юлташăн бригади 104 процент тултарнă, 196 килограмм горючи перекетленĕ.

Чи лайăх трактористсем: **Г. Ахматуллин** тата **Н. П. Порфирьев** юлташсем, вĕсем ХТЗ маркăллă тракторпа сменăра 7—8-шар гектар сухалаҫҫĕ, **М. И. Казанова** юлташ сменăра 6—7-шер гектар сухаланă.

Ҫĕрулми лартас ĕҫе кая хăвармалла мар

Ҫуракине вĕҫлемелли фронтовой вунăкунлăхăн ҫурри иртрĕ. Пилĕк кун хушшинче чылай районсем тĕштырăсем акса пĕтерчĕҫ. Кунта Вăрнар, Красноармейски, Ҫĕрпӳ, Чурачăк, Элĕк, Шупашкар, Калинино, Сĕнтĕр, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри тата ытти хăшпĕр районсем те кĕреҫҫĕ. Ҫак районсенчех, Элĕк районĕсĕр пуçне, ҫĕрулми лартасси те ăнăҫлă пырать, вĕсем плана 75—90 процента ҫити тултарнă.

Анчах та республикипе илсен, ҫĕрулми лартас ĕҫ колхозсенче ҫителĕксĕр пырать-ха. Чăваш АССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕ пĕлтернĕ тăрăх, ҫĕрулми лартмалли плана пурĕ те 33,4 процент кăна тултарнă. Уйрăмăнах ҫĕрулми лартас ĕҫ Улатăр, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Первомайски, Етĕрне, Йĕпреҫ районĕсенче чăтма ҫук япăх пырать. Вĕсенче ҫĕрулми пурĕ те 5—10 процент кăна лартнă.

Ҫĕрулми ҫĕршыври халăхпа Хĕрлĕ Ҫаршăн калама ҫук пысăк выран йышăнать. Ахальтен мар ĕнтĕ комсомолăн ялти пуçламĕш организаци секретарĕсен канашлăвĕнче М. И. Калинин юлташ ҫапла каланă: «Фашистла нимĕҫ захватчикĕсене ҫĕнтерес ĕҫе хутшăнас тесен, эсĕ ытларах ҫĕрулми лартма тивĕҫ. Халăх хушшинче ҫĕрулмине иккĕмĕш ҫăкăр теҫҫĕ. Ҫĕрулми промышленноҫшăн та паха чĕртавар пулса тăрать. Вăл оборонăллă культура. Ҫавăнпа та ҫĕрулмине вăхăтра лартса, ăна лайăх пăхса ҫитĕнтересси пысăк та ответлă ĕҫ».

Пирĕн республикăри колхозсем, 1944 ҫулхи ялхуҫалăх ĕҫĕсен государство планне чи лайăх пурнăҫлассишĕн Мари тата Мордва АССР-семпе социализмлă ăмăртăва тухса, хăйсем ҫине кашни гектартан вăтам шутпа 105 центнертан кая мар ҫĕрулми туса илме обязательство илчĕҫ. Ҫак обязательствăна пурнăҫлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕҫлемелле. Иртнĕ ҫул пирĕн колхозсем пысăк тухăҫлă ҫĕрулми туса илме май пуррине лайăх кăтартса пачĕҫ.

Шупашкар районĕнчи «Зерно» колхозра иртнĕ ҫул кашни гектартан вăтам шутпа 195-шер центнер ҫĕрулми пухса илнĕ. Ҫак районри Молотов ячĕпе тăракан колхоз та кашни ҫулах пысăк тухăҫлă ҫĕрулми туса илет, иртнĕ ҫул вĕсем кашни гектартан 165-шер центнер пухса илнĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Колос» колхоз иртнĕ ҫул уя 33 гектар ҫĕрулми лартнă, кунта та кашни гектартан вăтам шутпа 146-шер центнер ҫĕрулми пухса илнĕ. Ҫак колхозри Бочков юлташ ертсе пыракан бригадăн участокĕнче иртнĕ ҫул кашни гектартан 184-шер центнер ҫĕрулми тухнă. Ĕҫкунĕ ҫумне хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх, Бочков юлташ планран иртгерсе ҫĕрулми туса илнĕшĕн 3,6 тонна ҫĕрулми илнĕ. Ҫакăн пек тĕслĕхсем ытти районсенчен те илсе кăтартма пулать.

Пысăк тухăҫлă ҫĕрулми туса илесси вăн малтанах ăна вăхăтра лартниччен килет. Кая юлса лартни яланах ҫĕрулми тухăҫне чакарать. Пирĕн республикăри колхозсен кăҫал 32.000 гектар ҫĕрулми лартмалла. Майăн 25-мĕшĕ тĕлне пурĕ те 10.702 гектар кăна лартнă, иртнĕ ҫул ҫак вăхăт тĕлне 29337 гектар лартнă пулнă. Муркаш районĕнчи 63 колхоз ҫураки планне пур культурăсемпе те тултарнă. Ҫав вăхăтрах «Авангард», «Автан», «Правда», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем ку тарана ҫитсе те ҫĕрулми лартма пуҫăнман. Ҫак тĕслĕх вăл кăҫал ҫĕрулми лартасси ытла та вăрах пына пыни ҫинчен калать. Шăмăршă районĕ пурĕ те 65 гектар, Кувакино — 22 гектар, Хĕрлĕ Чутай—84 гектар, Йĕпреҫ—79 гектар, Улатăр—32 гектар кăна ҫĕрулми лартнă. Паллах ҫакăн пек хăвăртлăхпа ĕҫлесен, ҫав районсем фронтовой вунăкунлăхра ҫураки ĕҫĕсене вĕҫлеме пултараймаҫҫĕ. Тӳрех каламалла, ĕҫе пĕлсе организацилени, ҫак ĕҫе колхозниксен массине мобилизацилени ҫителĕксĕр. Юлса пыракан Йĕпреҫ районнех илер. Кунта Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз майăн 22-мĕшĕ тĕлне ҫĕрулми лартса пĕтернĕ. Ҫав колхозра 60—70 ҫулхи Андреев, Железнов пек ват ҫынсемпе пĕрле 14 ҫулхи И. Ефимов пек колхозниксем те ака ĕҫĕнче кунне-ҫĕрне пĕлмесĕр ĕҫленĕ.

Шăмăршă районĕн руководителĕсем те час-часах Йĕпреҫсем пекех: «эпир вăрман хушшинче ларатпăр, тăпра чĕрĕ, лашасем вăйсăр»,—тесе, хăйсем сӳрĕккĕн ĕҫленине витме пăхаҫҫĕ. Анчах те «Заря свободы», «Знамя Октября» тата ытти хăшпĕр колхозсем улма лартса пĕтернине кăтартсан, вĕсем:—вăл колхозсенче вăрлăх ҫителĕклĕ, лашасем вăйлăрах, тесе ответлеҫҫĕ. Вăрлăх ҫителĕксĕрри ҫуракине тухиччен паллă пулнă, ҫавăнпа ҫĕрулми тăррине, калчисене хатĕрлес тĕлĕшпе вĕсен уйрăмăнах лайăх ĕҫлемеллеччĕ. Халĕ ĕнтĕ вăрлăх ҫук тесе алла усса ларни ҫăлса хăвараймасть, кӳршĕллĕ колхозсенчен тата колхозниксенчен кивҫен илессине организацилемелле. Нумай колхозсем ку тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартса пачĕҫ. Чкаловски районри Роза Люксембург ячĕпе тăракан колхозра колхозниксем хăйсен колхозне вăрлăхлăх ҫĕршер пăт ҫĕрулми пухса панă. Колхозник А. Гебетов 30 пăт, ун хыҫҫăн Алексеев, Думилин, Паймуков тата ытти колхозниксем те вăрлăхлăх ҫĕрулми хывнă. Ҫакăн пек пархатарлă тĕслĕхсем Кувакино районĕнчи Суворов ячĕпе тăракан колхозра тата ытти районсенче те нумай. Ҫак пуçарăва ҫĕрулми вăрлăхĕ ҫитмен районсенче пур тĕлте те анлăн сармалла.

Пысăк тухăҫлă ҫĕрулми туса илесси вăл пĕтĕмпех хамăртан килет. Ҫĕрулмине куллен пăхмалла; вăхăтра акнă хыҫҫăн, шăтса тухсан сӳрелемелле, апат памалла, ҫумкурăкĕсенчен тасатсах тăмалла тата ытти те.

Ҫĕрулми лартнă участоксем ҫумне уйрăм звеносене ҫирĕплетмелле, вĕсем валли кирлĕ инвентарь ҫителĕклĕ памалла. Звено членĕсене уйрăм лаптăксем ҫумне ҫирĕплетмелле, планран иртгерсе тухăҫлă ҫĕрулми туса илнĕшĕн ĕҫкунĕ ҫумне хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх натурăпа премии пуласси ҫинчен тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Колхозсен паянхи задачи вăл—ҫĕрулми лартас ĕҫе пур колхозниксене те мобилизацилесе, плана кĕске вăхăтрах пурнăҫласси. Ҫĕрулми вăрлăхне вырăнта колхозниксемпе колхозницăсенчен пухассине организацилемелле. Партипе комсомол организацийĕсем ҫĕрулми лартмалли плана тултарассишĕн массăллă-ăнлантарулă ĕҫе анлăн туса пыма тивĕҫлĕ.

Ҫĕрулми лартас ĕҫпе пĕрлех республикăра йĕтĕн-кантăр, пахча-ҫимĕҫсем акассине те хăвăртлатса пымалла. Вĕсене акмалли плана пурĕ те 30 процент ытларах ҫеҫ тултарнă. Улатăр, Пăрачкав, Шăмăршă тата Сĕмĕрле районĕсем ку енĕпе ытла та япăх ĕҫлеҫҫĕ, вĕсем пурĕ те 10—20 процент таран ҫеҫ акнă.

Ҫĕрулмипе пахча-ҫимĕҫсене вăхăтра акса пĕтерессишĕн пĕтĕм вăя мобилизацилемелле. Колхозниксемпе колхозницăсем! Ҫĕрулми Хĕрлĕ Ҫаршăн, ҫĕршывшăн питĕ кирлĕ тата паха ҫимĕҫ пулса тăрать, ҫавăнпа та ҫĕрулми лартмалли плана ытлашшипе пурнăҫлассишĕн пĕтĕм вăй-хала хурса ĕҫлер, социализмлă ăмăртăва вăйкăнрах сарар.

Ҫуракине вĕҫлемелли вунăкунлăх

Красноармейски район ҫураки планне тултарнă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 29-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Майăн 28-мĕшĕ тĕлне районри колхозсем ҫураки ĕҫне ăнăҫлăн вĕҫленĕ. 11.800 гектар вырăнне 11.810 гектар акнă. Вăл шутра пĕрчĕллĕ тата пăрҫа йышши тырăсем 9.211 гектар, ҫĕрулмипе пахча-ҫимĕҫсем 1.272 гектар, техникăллă культурăсем 475 гектар акнă

Вăрнар районĕ ҫураки планне тултарчĕ

ВĂРНАР, майăн 29-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Паян районри колхозсем ҫураки планне тултарчĕҫ. Мĕн пурĕ 10.750 гектар акнă.

Райсовет исполкомĕн председателĕ **П. ОСИПОВ.**
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ **С. КОРОТКОВ.**

Тĕштырăсем акса пĕтернĕ

МУРКАШ, майăн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем, майăн 26-мĕшĕ тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрҫа йышши тырăсене 9.332 гектар акса, плана тултарнă. Паянхи кун тĕлне пур йышши культурăсене 11.268 гектар акнă, ҫапла вара ҫураки планне 97 процент тултарнă. Ҫĕрулми лартмалли плана 74 процент, кантăр акмалли плана 57 процент пурнăҫланă. Районра фермăсем ҫумĕнчи участоксене акасси те ăнăҫлăн пырать, паянхи кун тĕлне 111 гектар акнă.

Районри 63 колхоз ҫуракинче акмалли пур тĕрлĕ культурăсене те акса пĕтернĕ. Уйрăмăнах Свердлов ячĕпе тăракан «Красное Сормово» тата «Крестьянин» колхозсем ҫураки ĕҫĕсене пысăк пахалăхпа иртгерчĕҫ. «Труд» колхоз 382 гектар вырăнне 397 гектар акрĕ, «Красное Сормово» колхоз 230 гектар вырăнне 234 гектар акрĕ.

Анчах районра юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Муркашри «Авангард», Тивĕш ялсоветĕнчи «Автан», Шĕвĕш ялсоветĕнчи «Правда» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем чăтма ҫук юлса пыраҫҫĕ, ҫак колхозсем пĕрчĕллĕ тырăсене те акса пĕтермен.

Т. ИВАНОВ.

Ҫум ҫумлаҫҫĕ

СОВЕТСКОЕ. Ҫурхи тырăсем лайăх шăтса тухрĕҫ. Калчасем кунран-кунах ҫăраланса, ӳссе пыраҫҫĕ.

Малта пыракан колхозсем уйхирсене ҫумкурăкран тасатма тытăнчĕҫ. Анат Сăнарти «Новый путь» колхоз 5 гектар ҫинчи сĕлле ҫумкурăксенчен тасатрĕ. Ҫум ҫумлама «Электросвет», «Ыраш» колхозсенче те тытăннă.

Я. СИГАЙ.
М. ДИМИТРИЕВ.

ҪУРАКИНЕ ВĔҪЛЕМЕЛЛИ ВУНĂКУНЛĂХ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

(Майăн 29-мĕшĕ тĕлне)

Районсем	мĕнле вырăн
Красноармейски	1
Вăрнар	2
Муркаш	3
Ҫĕрпӳ	4
Элĕк	5
Чурачăк	6
Сĕнтĕр	7
Сĕнтĕрвăрри	8
Шупашкар	9
Вăрмар	10
Калинино	11
Октябрьски	12
Елчĕк	13
Куславкка	14
Тăвай	15
Етĕрне	16
Шăхасан	17
Ишлей	18
Советски	19
Комсомольски	20
Канаш	21
Йĕпреҫ	22
Чкаловски	23
Сĕмĕрле	24
Улатăр	25
Пăрачкав	26
Первомайски	27
Хĕрлĕ Чутай	28
Шăмăршă	29
Кувакино	30

Заем вылявĕ пулса иртнĕ

Майăн 28-мĕшĕнче Мускавра государствăн 3-мĕш пятилетка заемĕн (тăваттăмĕш ҫулхи кăларăмĕн) вуннăмĕш вылявĕ пулса иртнĕ.

3.000 тенкĕлĕх выигрыш 118.454 серири 41-мĕш номер облигаци ҫине тухнă. Ҫапла вара, заемăн выляса илекен кăларăмĕнчи мĕнпур 70 разрядĕнче те 41-мĕш номер облигацисем кашниех 3.000-шер тенкĕ выляса илнĕ пулать. (ТАСС)

Шупашкар районĕнчи «Победа» колхоз, ҫуракинче пĕр минут вăхăта та сая ярас мар тесе, апата хиртех пĕҫермелле турĕ. Ҫуракине вĕҫленĕ хыҫăн уборка машинисене юсаса хатĕрлесе хунă.

Ӳкерчĕк ҫинче: сылтăмра — хирте апат пĕҫереҫҫĕ; сулахайра — юсаса пĕтернĕ косилкăсене йышăнаҫҫĕ.

Чкаловски МТС ҫуркунне тракторпа тумалли ĕҫсен планне тултарнă

ЧКАЛОВСКОЕ, майăн 29-мĕшĕ. (ТЕЛЕФОНПА). Паян МТС тракторсемпе ҫуркунне тумалли ĕҫсен планне 104 процент тултарнă, 4.820 гектар сухалас вырăнне 5.013 гектар сухаланă.

МТС-ри 16 бригадăран 9-шĕ хăйсен ĕҫ планĕсене ытлашшипех тултарнă. Уйрăмăнах ҫак бригадăсем лайăх ĕҫленĕ. Ситов юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада ҫуркунне тракторпа тумалли ĕҫсен планне 160 процент, Люкин юлташ ертсе пыракан 12-мĕш бригада 146 процент, Константинова юлташ ертсе пыракан 7-мĕш бригада 145 процент, Елагин юлташ ертсе пыракан 14-мĕш бригада 132 процент тултарнă.

Трактористка Петрова юлташ, СТЗ тракторпа ĕҫлесе, ҫуркуннехи ĕҫсен планне 200 процент тултарнă.

Ҫуртыррисене акса пĕтереҫҫĕ

ҪĔРПӲ, майăн 27-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Районри 76 колхоз ҫуртыррисене акса пĕтернĕ. Ферма ҫумĕнчи участоксене паянхи кун тĕлне 187 гектар, пурпичех ытларах выльăх кăшманĕ тата ҫĕрулми акнă. Районри колхозсем 223 гектар кок-сагыз акса плана ытлашшипех тултарнă. 48 колхоз ҫĕрулми лартас ĕҫе те вĕҫленĕ. Нумай колхозсем ҫĕрулмине планпа пăхниччен иртгерсе лартаҫҫĕ. Сăмахран, «Ильич» колхоз 6 гектар ӳстерсе акнă. Ҫавăн пекех «Красный бригадир», «Красный Октябрь» тата ытти колхозсем те планран иртгерсе 5—6 гектар акнă.

Районра агротехникăллă мероприятисене лайăх пурнăҫласа пыраҫҫĕ. Пĕрчĕллĕ тырăсене 4702 гектар сеялкăпа акнă. Уйрăмăнах «Ĕмĕт», «Дружба», «Ким», «Нева» колхозсем ҫураки вăхăтĕнче агротехникăна лайăх пурнăҫласа пычĕҫ. «Ильич» колхоз 225 гектартан 200-не сеялкăпа акнă. Ҫак колхозсем ҫураки ĕҫĕсене 7—8 ĕҫ кунĕнче вĕҫленĕ.

З. МИТРОФАНОВА

Ака ĕҫĕ вĕҫленчĕ

ТĂВАЙ. «Хурçă» колхоз майăн 20-мĕшĕ тĕлне ҫураки планне иртгерсе тултарчĕ. План тăрăх 342 гектар акса хăвармаллачĕ, 381 гектар акнă. Кунсăр пуҫне 11 гектар кок-сагыз, 12 гектар кантăр акса хăварнă. Ҫĕрулми лартса пĕтерчĕҫ.

Ҫураки пысăк пахалăхпа иртрĕ. Агротехникăллă мероприятисене пурнăҫа кĕртес тĕлĕшпе те чылай ĕҫсем тунă. 481 центнер тырра тĕрлĕрен имҫампа чӳхесе акнă, 250 центнер вăрлăха яровизациленĕ.

Агитмассăллă ĕҫ те уйра анлăн пулса пычĕ. 5-мĕш бригада (бригадирĕ А. Куракин) ҫураки планне чăн малтан тултарчĕ. Акакансем 61 ҫулхи М. Куракин (унăн 3 ывăлĕ фронтра), 60 ҫулхи С. Дмитриев нормăна 120-шер процент тултарса пычĕҫ. Колхоз тимĕрҫи Корнер час-часах хирте пулса, плугсене юнтах юсарĕ. Ветфельдшер Иванов та ака вăхăтĕнче яланах хирте лашасен пăтĕнче пулчĕ. Конюхсем лашасем валли хирте апат пĕчĕк урапасемпе турта-турта тухрĕҫ. Ăмăрту анлăн сарăлса пычĕ.

Письмоносец Козлова юлташ хаҫат-журналсене уйра салатрĕ. Бригадăсенче 22 номер боевой листок, унсăр пуҫне тата 3 номер стена хаҫачĕ тухрĕ. Кашни участока актпа йышăннă.

Халĕ колхозниксем кил çырăнĕсенче ҫĕрулми лартаҫҫĕ, пахча-ҫимĕҫсем акаҫҫĕ. Ҫак кунсенчех калчасене ҫумкурăкĕсенчен тасатма тытăнаҫҫĕ. Ҫуракине ăнăҫлăн иртгертĕмĕр, вăйлă тырпулшăн кĕрешесси малалла пырать.

Агротехник **В. ЧАЙКИН.**

Агитколлективсене ĕҫре пулăшаҫҫĕ

ВКП(б) Куславкка райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕ колхозсенчи агитколлективсене пулăшма агитбригада организациленĕ. Унта ĕҫлеме райком пропагандисчĕсене, районри чи лайăх агитаторсене, медицина работникĕсемпе комсомол работникĕсене явăҫтарнă.

Ҫак кунсенче бригада «Правда», «Динамо», «Заря», «Новая жизнь» колхозсенче пулчĕ. Агитбригада членĕсем асăннă колхозсенче Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне ăнлантарса парас енĕпе колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче калаҫусем иртгерчĕҫ. Ҫав калаҫусенче 1230 ҫын пулнă. Ҫулпуҫăн приказне ăнлантарса парассине колхозсем умĕнчи хальхи вăхăтра тăракан практикăллă ĕҫсемпе сыхăнтарса пыраҫҫĕ.

Агитбригада колхозсенчи агитаторсене пысăк пулăшу парать. Энгельс ячĕпе тăракан колхозри агитколлектив (руководителĕ Максимова) агитбригада пыриччен питех те япăх ĕҫленĕ. Колхозри агитаторсемпе канашлу туса ирттернĕ хыҫҫăн, кашни агитатор тăрăшса ĕҫлеме тытăнчĕ. Агитацилĕ-массăллă ĕҫ лайăхланчĕ. Ҫакна май ҫураки хăвăртлăхĕ те чылай ӳсрĕ. Ку таранччен куллен 3—3,5-шер гектар акнă пулсан, халĕ 5—6-шар гектар акаҫҫĕ, колхозниксем нормăна иртгерсе тултарма пуҫларĕҫ. Колхозница И. Шерцева куллен 1,55 гектар акса пычĕ.

Колхоз ҫуртырри акмалли плана 8 ĕҫкунĕнче вĕҫлерĕ.

Агитбригада членĕ, медицина сестри А. Крылова юлташ кашни колхозрах сывлăха ҫирĕплетмелли мероприятисем ҫинчен, ҫуллахи вăхăтра чир-чĕрсемпе мĕнле кĕрешмелли ҫинчен тата ҫамрăк ачасене мĕнле пăхмалли ҫинчен калаҫусем туса ирттерет.

Агитбригада ĕҫĕнче ҫитменлĕхсем те пур-ха. Вăл колхозниксемпе колхозницăсене тырпул тухăҫне хăпартма, тухăҫлă пахча-ҫимĕҫсем туса илме вĕрентме ялхуҫалăх специалисчĕсене ĕҫе явăҫтармасть. Комсомол организацийĕсен ĕҫне лайăхлатас тĕлĕшпе ҫителĕксĕр ĕҫленĕ.

Агитбригада руководителĕсен малашнехи ĕҫре ҫаксене асра тытмалла.

И. ШАРКОВ.

Колхоз патриочĕсем

Чурачăк районĕнчи «Пчелкино» колхоз ҫуракине лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Ҫуракине хатĕрленес ĕҫре пирĕн опытлă, ватă колхозниксем нумай пулăшрĕҫ. Сăмахран 70 ҫулхи М. Максимов юлташах илер. Вăл ман бригадăна кирлĕ урапасене пĕтĕмпех юсаса хатĕрлерĕ. Ут таврашĕсене те вăлах юсарĕ.

Унăн пĕр ывăлĕ фронтра.

— Пулăшас килет колхоза, ахаль ларас килмест. Ҫамрăксем тăшмана ҫапăҫаҫҫĕ, эпир вара пулăшса та колхозра ĕҫлемелле. Фронтран ҫамрăксем таврăнсан пире тав тăвĕҫ,—тет Максимов юлташ. Колхоз правленийĕ Максим Максимовича лайăх ĕҫленĕшĕн премилерĕ.

Ефрем Ермолаевич Ермолаев та 68 ҫулта, унăн икĕ ачи фронтра. Вăл ҫуракинче стахановла ĕҫлет, унăн лашисем ывăнмаҫҫĕ, плугĕ те пăсăлмасть. Ҫав патриот кулленех пĕр гектар вырăнне 1,5 гектар сухалать. Ĕҫе вăл тĕплĕ тăвать.

— Ĕҫе япăх тăвакан ҫынна халĕ вăрҫă пынă вăхăтра, тăшмана темелле. Камшăн ĕҫлетпĕр —хамăршăн, фронтра ҫапăҫакан хамăр ывăлсемшĕн ĕҫлетпĕр. Ҫавна манма юрамасть, — тесе ятлать начар ĕҫлекенсене Ермолаев юлташ.

Г. ГАВРИЛОВ,
Колхоз бригадирĕ.

Шкулсенчи пĕлӳ тĕрĕслевĕ

ВКП(б) райкомĕ пĕлӳ тĕрĕслевĕ ҫинчен

ЙĔПРЕҪ. ВКП(б) райкомĕн бюровĕ ҫак кунсенче районри шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕ мĕнле пыни ҫинчен сӳтсе явнă. Райком шкулсенчи чылай ҫитменлĕхсене палăртрĕ. Йĕпреҫри вăтам шкулта тĕрĕслӳ вăхăтĕнчи расписанисене япăх тунă, хăшпĕр шкулсенче ачасене тĕрĕслеве явăҫтарас тĕлĕшпе ҫителĕксĕр ĕҫлеҫҫĕ.

Райком бюровĕ пĕлӳ тĕрĕслевне иртгерес ĕҫри ҫитменлĕхсене пĕтерме тата ăна инструкцие ҫирĕппĕн пăхăнса пырса, лайăх иртгерме мероприятисем палăртса хăварчĕ.

Пуҫламĕш шкулсенче пĕлӳ тĕрĕслевĕ вĕҫленчĕ

МУРКАШ, майăн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пуҫламĕш шкулсенче пуринче те пĕлӳ тĕрĕслевĕсем вĕҫленчĕҫ. Нумай шкулсенче тĕрĕслеве лайăх, инструкцие ҫирĕппĕн пăхăнса иртгернĕ. Шуркассинчи 4-мĕш класра 11 ача вĕреннĕ. Вĕсем пурте ăнăҫлăн вĕренсе тухнă. Ҫавăн пекех Хăймалакассинчи шкултан та пурте ăнăҫлăн вĕренсе тухнă. Ҫав шкулсенчи учительсем Ильин тата В. Иванова юлташсем ачасене ҫирĕп пĕлӳ панă.

Ҫавăнпа пĕрлех тĕрĕслӳре хăшпĕр шкулсенчи учительсем ҫителĕксĕр ĕҫлени палăрчĕ. Ҫапла, Ярапайкассинчи шкулта 4-мĕш класра пурĕ 20 ача вĕреннĕ. Вĕсенчен 16-шĕ ҫеҫ вĕренсе тухнă. Унта учительница пулса Т. Романова ĕҫлет.

Хăшпĕр шкулсенче учительсем расписание пăсписем те пулнă. Юськассинчи шкулта ҫар ĕҫне мĕнле вĕреннине расписанипе палăртнă срокра тĕрĕслемен. Куншăн военрук П. Алексеев ответлă, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕслӳ кунĕнче шкула пыман.

Вĕренекенсен пĕлĕвĕсене тĕрĕс хакламаҫҫĕ

КАЛИНИНО, майăн 29-мĕшĕ. (Телефонпа). Калининори вăтам шкулта 6-мĕш «А» класра вĕренекенсем тăван чĕлхепе пулнă тĕрĕслевре 27 ачаран 13-шĕ пятеркăсем, 8-шĕ четверкăсем, 6-шĕ тройкăсем илнĕ. 4-мĕш класра вырăс чĕлхипе ҫырнă диктантпа пурте пятеркăсемпе четверкăсем илнĕ

Анчах та ҫак фактсем пур классенче те пĕлӳ тĕрĕслевĕ ăнăҫлăн пынине пĕлтермеҫҫĕ-ха. Хăшпĕр классенче учительсем шкул ачисен пĕлĕвне ӳстерсе кăтартаҫҫĕ. 5-мĕш «А» класра вĕренекенсем алгебрăна начар пĕлеҫҫĕ. Ҫапла, И. ученик вуншарлă тата ахаль дробьсене те шутлама пултарайман. Ҫапах та ăна учительница Т. Корнилова тройка лартса панă. Кун пек тĕслĕхсем кунта татах та пур

Государство шкулта вĕренекенсен пĕлĕвĕсене тĕрĕс хаклама хушать. Ҫук пĕлĕво пур туса кăтартни—сиенлĕ.

Б. ШОРНИКОВ.

Кроса 2.890 ҫын хутшăннă

ҪĔРПӲ. Профсоюзпа комсомолăн ҫуллахи кросĕ—массăллă мероприяти. ВЛКСМ райкомĕ кроса ĕҫҫыннисене анлăн явăҫтарма малтанах тĕплĕн хатĕрленчĕ. Ялпа хулари ҫамрăксене физкультурăпа спортăн задачисем ҫинчен тата кросăн программипе тĕплĕн паллаштарнă. Район центрĕнче оргкомитет суйланă. Кросс ирттерме календарлă план туса ăҫта ирттермелли вырăнсене палăртнă.

Майăн 28-мĕшĕнче колхоз ҫамрăкĕсемпе шкул ачисем тата профсоюз членĕсем старта аслă уяв чухнехи пек хаваслăн тухрĕҫ. Малтанхи кун ăмăртăва 2.890 ҫын хутшăннă. Вĕсенчен ГТО нормин пĕрремĕш сыпăкĕ тăрăх 2.530 ҫын, иккĕмĕш сыпăк тăрăх 17 ҫын тата БГТО нормисене 321 ҫын панă.

Майăн 28-мĕшĕнче Шупашкарта профсоюзпа комсомолăн ҫуллахи кросĕ пуҫланчĕ. Пĕрремĕш кун хĕрарăмсенчен «Буревестник» обществăн членĕ Е. Маркова мала тухрĕ, вăл 500 метра 1 минут та 25 секунда хушшинче чупса тухрĕ.

Ӳкерчĕк ҫинче: «Буревестник» обществăн членĕ Е. Маркова финиш патне-чи малтан чупса ҫитет.

С. ФРИД фотоӳкерчĕкĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАЙĂН 27-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 27-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Майăн 26-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 30 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН ТОРПЕДĂСЕМ ПĂРАХАКАН САМОЛЕТСЕМ ТĂШМАН ТРАНСПОРЧĔСЕНЕ ПЫРСА ÇАПНИ

Майăн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн торпедăсем пăрахакан самолечĕсем тăшман транспорчĕсене пыра-пыра çапнă. Вĕсем Рига заливĕнче нимĕçсен 2 пысăк транспортне шыва путарнă. Тата, унсăр пуçне, Финн заливĕнче тăшманăн пĕтĕмĕшпе 7.000 тонна таякан 2 транспортне шыва путарнă.

☆ ☆ ☆

Майăн 26-мĕшĕнче тăшманăн 70 самолечĕ пирĕн Финн заливĕнчи флотăн пĕр объектне тапăнма хăтланнă. Совет истребителĕсем нимĕç самолечĕсене çапаласа янă, вара лешсем хăйсен бомбисене тинĕсе пăрахнă. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем тăшманăн 20 самолетне персе ÿкернĕ, вăл шутра 11 бомбардировщик, 9 истребитель. Пирĕн 2 самолет хăйсен аэродромĕсене таврăнман.

МАЙĂН 28-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Майăн 28-мĕшĕнче фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 14 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН КАРАПСЕМ ФИНН ЗАЛИВĔНЧЕ НИМĔÇСЕН ПОДВОДНĂЙ ЛОДКИНЕ ШЫВА ПУТАРНĂ

Çак кунсенче Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем дозорта çÿренĕ чухне Финн заливĕнчи утравсенчен пĕрин сывăхĕнче тăшманăн подводнăй лодкине курнă. Пирĕн карапсем нимĕçсен çав подводнăй лодкине çавăнтах атакăланă та шыва путарнă.

☆ ☆ ☆

Тирасполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсем çĕрле çапăçса разведка тума хăтланнă. Пĕр чаçри твардеецсем, минометсемпе тата пулеметсемпе персе, тăшмана пысăк çухатусем кÿнĕ. Гитлеровецсем пирĕн оборонăн малти хĕррине çитеймен, нимĕн йĕрки-паллисĕр каялла чакнă.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронтра нимĕç самолечĕсен ушкăнĕ пирĕн позицисем çине бомбăсем пăрахма хăтланнă. Марк Усов старшина тăшман самолечĕсене пулеметпа пеме пуçланă. Пĕр самолет çунма тытăннă, çĕре ÿксе тăрăннă. Иван Шивго красноармеец винтовкăпа персе, тăшманăн тепĕр самолетне çĕмĕрнĕ. Çав самолет вара пирĕн территори çине анса ларнă. Унăн çу бакне персе шăтарнă пулнă. Самолет çинчи летчика тыткăна илнĕ.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тăшман каллех пирĕн подразделенисем çак кунсенче туртса илнĕ çÿллĕ вырăна каялла илме хăтланнă. Ирхине нимĕçсен пехоти пирĕн позицисене темиçе енчен атакăланă. Çÿллĕ вырăна хÿтĕлекен пĕр чаçри боецсем нимĕçсене артиллерирен тата минометсемпе, пулеметсемпе вăйлă пемe тытăннă. Нимĕçсен атаки путланса ларнă. Пирĕннисем пенипе сайралса юлнă тăшман подразделенийĕсен вара хăйсен малтанхи позицийĕсем çине каялла чакма лекнĕ. Çапăçу пынă вырăнта тăшман 230 вилли [illegible] шута илнĕ.

* * *

Могилев облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ майăн 11-мĕшĕнче 3 автомашина сирпĕнтерсе янă, автомашинисем çинчи гитлеровецсем пурте пĕтнĕ. Нимĕçсен командованийĕ партизансене хирĕç каратель экспедици янă. Вара партизансем, çаврăнса илмелли маневр туса, каратель отрядне флангран атакăланă та аркатса тăкнă. Совет патриочĕсем нимĕçсене шыв хĕрне хĕссе лартнă. Нимĕçсем шыв урлă ишсе каçса çăлăнма тăнă, анчах та партизансем, тĕл персе, пурне те пĕтерсе тăкнă. Çак çапăçура партизансем гитлеровецсене пĕр ротăран ытларах тытса [illegible] Тыткăна илнисем пур.

* * *

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче нимĕç çарĕсем йывăр поражени сем тÿснĕ хыççăн нимĕçсем, хаяр мерăсем йышăнса, Эльзаспа Лотарингире мобилизаци туса ирттернĕ. Нимĕçсен çарне вăйпа илнĕ французсем халь Хĕрлĕ Çар енне куçаççĕ.

Нимĕçсен 28-мĕш çăмăл пехотнăй дивизийĕнчен Хĕрлĕ Çар енне каçнă француз Жозеф Б., Лотарингире пурăннăскер, çапла каласа кăтартнă: «Нимĕçсем манăн аттепе аннене Силезие хăваласа кайрĕç. Вĕсен пурнăçĕ унта питĕ йывăр, вĕсем чи йывăр ĕçре тăраççĕ. Нимĕçсем пирĕн тăван çĕршыва чуралăха кĕртсе ÿкерчĕç. Паллах ĕнтĕ, пĕр тÿрĕ француз çынни те нимĕç çарĕнче тăрас çук. Эпĕ тата манăн туссем Анри Шарльце Эжен пĕр окопра тăтăмăр. Пирĕнпе пĕрле пĕр нимĕç пурччĕ. Ирхине ирех, нимĕç аяккалла пăрăнсан, эпир хамăр винтовкăсене илтĕмĕр те вырăссем патне тартăмăр».

Нимĕçсен 454-мĕш пехотнăй дивизийĕнчен тыткăна параннă салтак Пьер В. çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ французсен çарĕнче тăтăм, анчах та 1940 çулхи июнĕн 14-мĕшĕнче нимĕçсем пăтне тыткăна лекрĕм. Тыткăна лекнĕ салтаксен лагерĕнче нимĕçсем французсенчен темĕн тĕрлĕ те мăшкăллатчĕç. Кунсерен вĕсем темиçе вунă хут та çапла калатчĕç: французсем çынсем мар, выльăх [illegible] 1943 çулта мобилизаци [illegible] Совет Союзĕпе Германи фронтне [illegible]».

Нимĕçсен 14-мĕш [illegible] тыткăна лекнĕ салтак, Эльзасра пурăнан француз Леон Д. çапла каласа кăтартнă: «Эпĕ французсен [illegible]».

Чăваш халăх поэчĕн С. В. Эльгерĕн юбилейĕ

Майăн 27-мĕшĕнче чăваш халăх поэчĕ Семен Васильевич Эльгер çуралнăранпа 50 çул тултарнă ятпа чăваш совет писателĕсен Союзĕн савăнăçлă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Ларăвăн президиумĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ — Чарыкова Андреев юлташ, Парти Контроль Комиссийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Логвин юлташ, ЧАССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ Андреева юлташ, ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕсем Семенова, Евлампиев юлташсем, Шупашкар хула совечĕн председателĕ Аникин юлташ, Совет Союзĕн Герое Ахаев юлташ тата литературăпа искусство работникĕсем пулчĕç.

Ларăва ЧАССР Совнарком председателĕн заместителĕ Евлампиев юлташ уçрĕ.

С. В. Эльгерĕн пурнăçĕпе творчествăлла çулĕ çинчен чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленин членĕ А. Эсхель доклад туса панă.

Доклад хыççăн саламсем пуçланчĕç. ЧАССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕпе Совнарком, ВКП(б) Обкомĕн ячĕпе Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ Измайлов юлташ, Шупашкар хула совечĕ тата ВКП(б) хула комитечĕн ячĕпе — ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Исаюков юлташ, ВЛКСМ Чăваш Обкомĕн ячĕпе Михайлов юлташ саламларĕç, [illegible] Н. Тукташ, искусство ĕçĕсен Управленийĕ ячĕпе — А. Калган, [illegible] юбилей ячĕпе [illegible] А. Эсхель вуласа панă.

Лару хыççăн пысăк концерт пулса иртрĕ. Концерта Лукин композитор художественнăй руководитель пулса ертсе пынă ансамбль, [illegible] Чăваш Академи театрĕн артисчĕсем хутшăнчĕç. [illegible] С. В. Эльгерĕн «Чакка» пьеси [illegible].

Сталинградри трактор заводне хута ярас умĕн

Сталинградри трактор заводĕнче [illegible] Заводăн коллективĕ конвеер [illegible] 17 тонна [illegible] Деталсене [illegible] пырать. Моторсене [illegible] пырать, [illegible] Туса хатĕрленĕ [illegible] Çĕнĕ станоксем [illegible] Тăван хулана [illegible] (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунин" 85-мĕш, 92-мĕш, 94-мĕш, 95-мĕш, 96-мĕш, 98-мĕш, 99-мĕш, 100-мĕш, 101-мĕш, 102-мĕш тата 105-мĕш номерĕсенче).

ШĂХАСАН РАЙОНĔ ТĂРĂХ

23. Евдокия Осиповна **Осиповăна** — «Ямурза» колхозăн колхозницине.
24. Марфа Павловна **Павловăна** — Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
25. Александра Петровна **Петровăна** — Молотов ячĕпе тăракан колхозăн колхозницине.
26. Елена Петровна **Петровăна** — «Активист» колхозăн колхозницине.
27. Константин Петрович **Петрова** — машинно-тракторнăй станцин бригадирне.
28. Павел Петрович **Петрова** — ВКП(б) райкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарьне.
29. Егор Федорович **Пигальцева** — Киров ячĕпе тăракан колхозри пуçламĕш парторганизацин секретарьне.
30. Мария Пименовна **Пименовăна** — «Победа» колхозăн бригадирне.
31. Ульяна Прокопьевна **Прокопьевăна** — «Канаш» колхозăн колхозницине.
32. Илларион Никифорович **Северова** — машинно-тракторнăй станцин старши механикне.
33. Васса Александровна **Степановăна** Киров ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
34. Елена Тимофеевна **Тимофеевăна** — «Канаш» колхозăн колхозницине.
35. Никита Тимофеевич **Тимофеева** — машинно-тракторнăй станцин трактор бригадин бригадирне.
36. Арсентий Филиппович **Филиппова** — СССР Уполнаркомзагăн Шăхасан районĕнчи агентне.
37. Иван Филиппович **Филиппова** — машинно-тракторнăй станцин трактор бригадин бригадирне.
38. Сергей Христофорович **Христофорова** — Куйбышев ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
39. Ульяна Яковлевна **Яковлевăна** — машинно-тракторнăй станцин трактористкине.

ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Иван Васильевич **Аношина** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.
2. Василий Михайлович **Ванюкова** — «Комбинат» колхозăн хурт-хăмăр пăхаканне.
3. Константин Иванович **Гогина** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн конюхне.
4. Петр Никандрович **Давыдова** — «Ударник» колхозăн тимĕрçине.
5. Дарья Евдокимовна **Дагонецкаяна** — «Первое Мая» колхозăн ĕне сăвакапне.
6. Никифор Тихонович **Ежова** — Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
7. Евдокия Кузьминична **Ильгачкинăна** — «Комбинат» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
8. Анастасия Сергеевна **Лисинăна** — «Подборное» колхозăн колхозницине.
9. Леонид Иванович **Моленские** — МТС трактористне.
10. Надежда Николаевна **Муминовăна** — «Искра» колхозăн МТФ заведующине.
11. Николай Степанович **Немакова** — Ленин ячĕпе тăракан колхозри пахча-çимĕç бригадин бригадирне.
12. Илларион Владимирович **Пичушкина** — «Комбайн» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
13. Евгения Кондратьевна **Симесовăна** — Комсомолăн «Комбинат» колхозри пуçламĕш организацийĕн секретарьне.
14. Димитрий Романович **Стафика** — «Большевик» колхозăн председательне.
15. Анна Алексеевна **Трифоновăна** — «Волга» колхозăн пăру пăхаканне.
16. Григорий Семенович **Тюкина** — МТС комбайнерне.
17. Александра Ивановна **Улисовăна** — «Навая жизнь» колхозăн сурăх пăхаканне.
18. Татьяна Федотовна **Федотовăна** — «Волга» колхозăн председательне.
19. Александра Парфеновна **Чекменевăна** — «1-ое Мая» колхозăн председательне.
20. Тимофей Иванович **Шорнана** — Гукас ялсовечĕн председательне.

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Прасковья Григорьевна **Александровăна** — Тельман ячĕпе тăракан колхозăн колхознице.
2. Алексей Николаевич **Афонькина** — «Красный Октябрь» колхозăн СТФ заведующине.
3. Александр Димитриевич **Бахирова** — Засурски лаша завочĕн МТФ заведующине.
4. Александра Дмитриевна **Булыгинăна** — МТС трактористкине.
5. Николай Анфилович **Васина** — Засурски лаша завочĕн конюхне.
6. Евгения Григорьевна **Воробьевăна** — Киров ячĕпе тăракан колхозăн сурăх пăхаканне.
7. Яков Степанович **Горелкина** — «11 лет Октября» колхозăн председательне.
8. Иван Демьянович **Демьянова** — «Новое звено» колхозăн председательне.
9. Капитолина Арсентьевна **Дербеневăна** — Калинин ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующине.
10. Манефа Димитриевна **Димитриевăна** — «Сура» колхозăн ĕне сăваканне.
11. Илларион Егорович **Долгова** — «Комбайн» колхоз утарĕн заведующине.
12. Антон Юльянович **Жукова** — машинно-тракторнăй станцин токарьне.
13. Ирина Федоровна **Жуковăна** — «Парижская Коммуна» колхозăн ĕне сăваканне.
14. Иван Васильевич **Зубина** — «Парижская Коммуна» колхозăн председательне.
15. Владимир Игнатьевич **Инеева** — машинно-тракторнăй станци мастерскойĕн заведующине — механика.
16. Анисия Ивановна **Ивановăна** — «Пионер» колхозăн ĕне сăваканне.
17. Григорий Иванович **Климанова** — МТС слесарьне.
18. Филипп Кондратьевич **Кондратьева** — Мичурин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
19. Агриппина Романовна **Лунинана** — «Победитель» колхозăн колхознице.
20. Александр Илларионович **Мазина** — «Парижская Коммуна» колхозăн МТФ заведующине.
21. Самуил Шлемович **Морголина** — Заготзерно хатĕрлев конторин директорне.
22. Вера Максимовна **Максимовăна** — «Родина» колхозăн председательне.
23. Феодосия Ивановна **Охандеровăна** «Красный Октябрь» колхозри уйхир бригадин бригадирне.
24. Александр Васильевич **Семова** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
25. Георгий Спиридонович **Спиридонова** — райсовет исполкомĕн председательне.
26. Анфиса Тимофеевна **Тимофеевăна** — Тельман ячĕпе тăракан колхозăн колхознице.
27. Мария Васильевна **Фирсовăна** — МТС трактористкине.
28. Александр Семенович **Фомичева** — Засурски лаша заводĕнчи уйхир бригадин бригадирне.
29. Василий Петрович **Фомичева** — Засурски лаша завочĕн конюхне.
30. Екатерина Михайловна **Черновăна** — «Комбайн» колхозăн ĕне сăваканне.
31. Ольга Константиновна **Чернышевăна** — ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕн «Победа» колхозри уполномоченнăйне.
32. Елизавета Ивановна **Шмаринăна** — Калинин ячĕпе тăракан колхозăн ĕне сăваканне.
33. Николай Николаевич **Шмелева** — ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕн заведующине.
34. Иван Алексеевич **Щепетова** — Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Етĕрне районĕнчи уполномоченнăйне.

ЕЛЧĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Иван Демьянович **Агеева** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн бригадирне.
2. Матрена Григорьевна **Александровăна** — «Трактор» колхозăн колхознице.
3. Александра Андреевна **Андреевăна** — райçĕрĕç пайĕн старши зоотехникне.
4. Константин Архипович **Архипова** — «Красный часовой» колхозăн машиноведне.
5. Алексей Афанасьевич **Афанасьева** — МТС тимĕрçине.
6. Димитрий Васильевич **Борисова** — «Смычка» колхозăн колхозникне.
7. Никонор Никитич **Волкова** — ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарьне.
8. Степан Никитич **Волкова** — МТС трактористне.
9. Мариям Ганеевна **Ганеевăна** — «Марс» колхозăн ферма заведующине.
10. Сабирулла Гарифулович **Гарифуллина** — Сăрьел ялсовечĕн председательне.
11. Панфил Викторович **Долгова** — МТС трактор бригадин бригадирне.
12. Иван Васильевич **Ефимова** — МТС токарьне-машинистне.
13. Забирула Закирович **Закирова** — «Марс» колхозăн старши конюхне.
14. Николай Васильевич **Игнатьева** — «Автогигант» колхозăн председательне.
15. Анна Николаевна **Ивановăна** — «Октябрь» колхозăн счетоводне.
16. Илья Кириллович **Кириллова** — Çĕнĕ Тÿскел колхозăн председательне.
17. Агафия Ивановна **Козловăна** — «Красный Восток» колхозăн ĕне сăваканне.
18. Мария Никитична **Красновăна** — «Путь Ленина» колхозăн ферма заведующине.
19. Раиса Константиновна **Константиновăна** — МТС трактористкине.
20. Матрена Афанасьевна **Ласточкинăна** — ВКП(б) райкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующине.
21. Степан Нудович **Лявина** — Крупская ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
22. Вениамин Андреевич **Маркова** — райçĕрĕç пайĕн заведующине.
23. Евстофий Тимофеевич **Мартынова** — Ленин ячĕпе тăракан колхозăн председательне.
24. Никандр Миронович **Мижерова** — Крупская ячĕпе тăракан колхозăн ферма заведующине.
25. Евгения Михеевна **Михеевăна** — МТС трактористкине.

(Юлашки пулать).

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: фронтсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ, союзниксен çарĕсем пĕтĕм фронт талккăшĕпех малалла куçнă.

Лири шывĕн улăхĕнче Англин 8-мĕш армийĕн чаçĕсем çаплах Мельфа шывĕ çинчи кĕпер умĕнчи укреплени çинчен малалла тапăнса пынă, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă. Сылтăм флангра Терелле, Монтекаиро тата Роккасекка пункчĕсене тăшмантан тасатнă.

Америкăн 5-мĕш армийĕн çарĕсем чылай пысăк территори туртса илнĕ, вĕсем Сан-Джованни, Пастена тата Монте Ротонда пункчĕсене туртса илнĕ. Амазено Приверно тата Сецце (Террачинăран çурçĕртерехре) патне çывăхарса çитнĕ. Кори хулине (Веллетрирен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре) туртса илнĕ.

Майăн 26-мĕшĕнче союзниксен карапĕ, тип çĕр çинче çапăçакан çарсене хăйсен туппиcен вут-çуламĕпе пулăшса, Анцио районĕнчи плацдармран çурçĕртерехре вырнаçнă тăшман объекчĕсене пенĕ. Пени усăллă пулнă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, тăшманăн Кăнтăр Францири çул-йĕрĕсем çинчи объектсене атакăланă.

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 26-мĕшĕнче ирхине çĕнĕ наступлени пуçланса кайнă. Союзниксен çарĕсем Альбано кÿлли еннелле тапăнса пыраççĕ. Ку кÿлĕ Римран 12 миля кăнтăртарахра. Малтанхи хыпарсем тăрăх, нимĕçсем каялла чакаççĕ. Вĕсем кунтан çурçĕртерехре çĕнĕ позицисем йышăнма васкаççĕ.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: майăн 27-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши бомбардировщиксем Людвигсхафенпа Аахенри чугун çул станцине тапăннă.

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, майăн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен 1.000 бомбардировщикĕ ытла Германири, Францири тата Бельгири объектсене тапăннă. Пĕтĕмĕшпе илсен, 4.000 тонна бомба пăрахнă.

Германире пуринчен те вăйлăрах Аахен, Берлин тата Дюссельдорф хулисене атакăланă. Францире пуринчен те ытларах Нант чугун çул центăрне тата Реннори аэродрома тапăннă.

Паян ирхине союзниксен авиацийĕ каллех Çурçĕр Франципе Бельгири чугун çул сооруженийĕсене тата ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, паян американецсен йывăр бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем Кельн хулине тата Кăнтăр-Хĕвеланăç Германие хаяррăн тапăннă. Çав бомбардировщиксене 1.200 истребитель ытла хÿтĕлесе пынă.

Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх çак операцисенче пĕтĕмпе 2.500 самолета яхăн пулнă.

ЮГОСЛАВИРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарсен чаçĕсем Словенире наступлени пуçласа янă, Требне хулинчен çурçĕртерехре Мирна ятлă çирĕплетнĕ пункта тăшмантан туртса илнĕ. Нимĕç çарĕсене хăйсен позицийĕсенчен çапса кăларса, Ново-Место еннелле хăваласа янă.

Хĕвелтухăç Боснире çапăçусем çаплах фронтăн пур участокĕсенче те пыраççĕ.

Хорватире, Мрежница шывĕ хĕрринче, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн чаçĕсем тăшман çарĕсене аркатса тăкнă, гитлеровецсене пысăк çухатусем кÿнĕ. Тăшман салтакĕсем шывра нумай путса вилнĕ.

Хĕвеланăç Боснире тĕллĕн-тĕллĕн çапăçаççĕ.

Загреб хулипе Белград хули хушшинчи чугун çул çинче партизансен отрячĕ тăшманăн виçĕ поездне ÿпĕнтерсе янă.

ЛОНДОНРА СЛАВЯНСЕН МИТИНГĔ ПУЛНĂ

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Лондонра славянсен митингĕ пулса иртнĕ, унта 1.500 çын пулнă. Митингра Англипе славянсен политика, общество тата профсоюз организацийĕсен делегацийĕсем, çавăн пекех тата Чехославаки министрĕсем, Чехословакин государство совечĕн членĕсем тата Чехословаки çарĕн представителĕсем пулнă.

Митинга кăнтăрти славянсен Пĕрлешÿллĕ комитечĕн представителĕ — Мĕнпур славянсен комитечĕн исполкомĕн членĕ Борис Фурлан уçнă.

Митингра çаксем сăмах тухса каланă: мĕнпур славянсен комитечĕн членĕ Владо Клементись (словак), хорват Бичанич, поляксен представителĕ Ян Ягодзинский, сербсен журналисчĕ Михаил Петрович, болгар Михаил Падев, Карпатри украинец Петрущак тата чех Давид.

Митинга пынă çынсем, вăйлăн алă çупса, Сталина, Черчилле, Рузвельта, Бенеша тата Титона яма саламлă çырусем йышăннă.

Митинг славян халăхĕсене чĕнсе каланă.

ФИНЛЯНДИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТОКГОЛЬМ, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Финсен хаçачĕсем ялхуçалăхĕнче лару-тăру çивĕчленсе кайни çинчен хăраса çыраççĕ. Çанталăк начар тăнă пирки çураки ĕçĕсем пĕтĕм çĕршывĕпех нумай кая юлнă. Тырă акас ĕç кая юлни çавăн пекех тата вăрлăх çитменнинчен тата халăх ялхуçалăх ĕçĕсене мобилизацилессинчен пăрăннинчен килнĕ. Нумаях пулмасть Финляндири радио влаçсене «ялхуçалăх ĕçĕсенчен пăрăнса çÿрекен çынсене ĕç повинность лагерĕсене яма» сĕннĕ.

«Хельсинген Саномат» ятлă хаçат снабжени министерствин пĕлтерĕвне пичетлесе кăларнă. Çав пĕлтерÿре малашне çăкăрпа ытти продуктсен нормисене çĕнĕрен чакарма пултарасси çинчен каланă.

СТОКГОЛЬМ, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, Аланд утравĕсем çинче пурăннă финсен нумайĕшĕ Швецие тарнă. Çав çынсенчен нумайĕшĕ Ботнически залив урлă хăйсен семьисемпе пĕрле каçнă.

ФИЛОВА ГИТЛЕР СТАВКИНЕ ПЫМА ХУШНĂ

СТОКГОЛЬМ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Стокгольмс Тиднинген» хаçатăн Берн хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Болгари регенчĕсенчен пĕри — Филов майăн 26-мĕшĕнче, Гитлер чĕннипе, Гитлер ставкине калаçма тухса кайнă.

СТАМБУЛ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарипе Турци хушшинчи телеграфпа телефон çыхăнăвĕ Божилов правительстви вырăнтан тухнă кун — майăн 19-мĕшĕнче — чарăнса ларнăччĕ. Çав çыхăну ку таранччен те ĕçлеме тытăнман-ха.

Кунта Болгарирен килнĕ çынсем каласа кăтартнă тăрăх, София хулине нимĕçсен гарнизонне вăйлатма Германин çĕнĕ чаçĕсем пынă.

ФАШИСТСЕН ПУÇЛĂХĔСЕН КАПИТАЛĔСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Швейцарире тухакан «Базель арбейтерцейтунг» хаçат фашистсен пуçлăхĕсен капиталĕсем çинчен илнĕ хыпарсене пичетлет. Çав хаçат каланă тăрăх, Герингăн ют çĕршыв банкĕсенче 3.575.000 доллар укçа выртать. Геббельсăн 4.635.000 доллар укçа пур. Риббентроп ют çĕршыв банкĕсене 3.165.000 доллар хывнă. Гиммлерăн ют çĕршывсенче 2 миллион доллар. Гесăн ют çĕршыв банкĕсенче 2.045.000 доллар укçа выртать.

КĂНТĂР ФРАНЦИРИ ПАРТИЗАНСЕМ 4 УЙĂХ ХУШШИ КĔРЕШНИН ИТОГĔСЕМ

ЖЕНЕВА, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Франци чиккинчен Француз партизанĕсемпе ирĕклĕ стрелоксем Францин кăнтăр районĕсенче 4 уйăх хушши кĕрешнин итогĕсем çинчен пĕлтереççĕ. Çав вăхăт хушшинче Француз патриочĕсем нимĕçсен оккупаци çарĕсемпе 110 хут çапăçнă, çав çапăçусенче вĕсен 1.100 çыннине вĕлернĕ, 1.000 çыннине ытла амантнă. Нимĕçсем валли ĕçлекен 182 предприятие ишнĕ. Электростанцисене 203 хут тапăннă. 470.000 литр горючи тата 170 тонна каучук çунтарса янă.

Француз партизанĕсемпе ирĕклĕ стрелоксем пуринчен ытла оккупантсен транспортне пыра-пыра çапнă. Тăватă уйăх хушшинче чугун çулсене 284 хут тапăннă, нимĕçсен 152 эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Çав тапăнусенче 940 паровоз тата 1570 вагон çĕмĕрнĕ. Çар грузĕсем нумай пĕтерсе тăкнă.

Патриотсем Француз гражданĕсене хупнă 15 тĕрмепе концентрациллĕ лагере тапăннă, вĕсенчен 612 çынна ирĕке кăларнă. Çав вăхăт хушшинчех нимĕç оккупанчĕсемпе Виши влаçĕсене сутăннă 311 çынна пĕтерсе тăкнă.

ГРЕЦИН ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВИ

КАИР, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Грексен Каирти информаци Бюровĕ пĕлтерÿ пичетлесе кăларнă. Пĕлтерÿре çапла каланă: премьер-министр Попандреу Грецин çĕнĕ правительствине тунă. Попандреу премьер-министр тата ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕпе çар министрĕ пулса ĕçлет.

ГОСУДАРСТВО ДЕПАРТАМЕНЧĔ АНГЛИПЕ АМЕРИКĂН ТЫТКĂНА ЛЕКНĔ ÇАР ÇЫННИСЕМ ПИРКИ СОВЕТ СОЮЗĔ ЯПОНИЕ ÇЫРСА ЯНИ ÇИНЧЕН

ВАШИНГТОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Государство департаменчĕ çапла каланă: Иден Англин тыткăнри çар çыннисем пирки Совет Союзĕ Японие çырса яма килĕшни çинчен каларĕ, тенĕ. Çакăн хыççăн пичет представителĕсем государство департаментне ыйтусем панă. Государство департаменчĕ вара çапла каланă: Пĕрлешÿллĕ штатсем тата Англи ыйтнипе союзниксен тыткăна лекнĕ çынсем пирки Совет Союзĕ Японие çыру çырса янă тенĕ.

АВТОРСЕМПЕ ВУЛАКАНСЕН КАНАШЛĂВĔ

Виçĕмкун, майăн 28-мĕшĕнче, ЧАССР Государство издательстви кĕнеке авторĕсемпе вулакансен канашлăвне туса ирттерчĕ. Писательсемпе поэтсем, учебниксемпе ытти тĕрлĕ кĕнекесем çыракан авторсемсĕр пуçне канашлура кĕнекепе сутă тăвакан организацисен представителĕсем, библиотекăсенче ĕçлекенсем т. ыт. те пулчĕç.

Чăвашгосиздат управляющийĕ П. Т. Золотов юлташ издательствăн 1943 çулхи тата 1944 çулăн пĕррремĕш кварталĕнчи ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕ. Ун хыççăн канашлăва пынă нумай юлташсем тухса каларĕç.

Чăвашгосиздатăн ĕçĕсем юлашки вăхăтсенче аванлансах пыраççĕ. Анчах та кĕнеке кăларас ĕçре çитменлĕхсем пурха. Чăн малтан массăллă ялхуçалăх литератури çителĕксĕр кăларни курăнать. Ача-пăча литератури çукпа пĕрех. Кĕнекесене час-часах тулаш енчен илемсĕр кăлараççĕ. Авторсемпе тата художниксемпе куллен ĕçлесе пыни пулман.

Канашлура тухса каланă юлташсем — ялхуçалăх институчĕн преподавателĕсем Тарчинский тата Наумов, Союзпечать пуçлăхĕ Гольц, писательсемпе поэтсем — Тукташ, Эсхель, Шавлы, Уяр т. ыт. малашне издательствăн ĕçĕсене епле майпа аванлатса пымалли çинчен каласа пачĕç. Чăвашгосиздат работникĕсем — Золотов, Эльгер, Агаков юлташсем канашлура тухса каланă кăтартусене пурне те йышăнса, малашнехи ĕçре çав кăтартусене кулленех пурнăçа кĕртсе пыма пулчĕç. Хăйсем енчен пур писательсемпе авторсене те издательство ĕçĕнче пулăшса пыма чĕнчĕç.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00151 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. б. 59X42 п. л. Тираж 14.400 экз.